ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "АЧАЛЛĂ ÇЕМЬЕСЕНЕ ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ ПАМАЛЛИ ХУШМА МЕРĂСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 8 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕ памалли хушма мерăсем çинчен" 2012 çулхи нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 1 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 3 №; 2015, 12 №; 2016, 11 №; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 7-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чăк уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000249 №; "Республика" хаçат, 2023, чăк уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2024, ака уйăхĕн 10-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 11-мĕшĕ) 8 статйин 1-мĕш пайне улшăну кĕртес, унта çакăн пек çырса 4-мĕш пункт хушса хурас:

"4) харпăр хăй вăйĕпе лартакан çурт-йĕр строительствин объектне тума, çак ĕçе граждансем строительство подрячĕн килĕшĕвĕ тăрăх эскроу счечĕсемпе усă курса харпăр хăй вăйĕпе лартакан çурт-йĕр строительствин объекчĕсене тăвакан организацине явăçтарса, асăннă укçа-тенкĕне хăйсене çав тĕллевсем валли кредит договорĕсем (заем договорĕсем) тăрăх укçа-

тенкĕ уйăрса панă кредит организацийĕсене укçасăр татăлу мелĕпе куçарса парса пурнăçлаççĕ. Çемье капиталĕн укçи-тенкине (укçи-тенкин пĕр пайне) эскроу счечĕ çине куçарма пултараççĕ, харпăр хăй вăйĕпе лартакан çурт-йĕр строительствин объектне тăвакан юридически сăпат е уйрăм предприниматель ун тĕлĕшпе бенефициар шутланать.".

2 **статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕ
19 №

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕ
Управление делопроизводства № 1